**Çeçпĕл**

Хĕç вылятса-и ыткăнаççĕ
Вĕç-хĕрсĕр курăнми çарсем? —
Сив хурçă пек çиçсе выляççĕ
Сив уйăх айĕн хăяхсем.

«Эппин, каллех кунта хăварчĕç,
Туссем пур — вăрçă хирĕнче...»
Тирек çумне хуллен таянчĕ,
Тăрать Десна çыранĕнче.

Чарусăр çил çаплах шинелĕн
Аркисене туртать, силлет.
Тĕрри йĕр кайнă, çĕткеленнĕ
Кĕпи çине шевле ӳкет.

Йĕр-йĕр тымарлă хĕрлĕ йывăç
Çине касса тĕрленĕ пек
Ун çӳçĕсем сулмаклă, йывăр
Выртаççĕ çирĕп йĕркепе.

Кĕрлет те çаврăнать синкерлĕ
Çилсемпеле тулса тĕнче.
Çапла пĕччен тăрать вăл тĕрлĕ

Вак кӗнекеҫӗ умӗнче...

...Ак эп каллех аса илетӗп
Тӑван чӗлхемӗре пӗрмай.
Ҫапла, пӗлетӗп эп: ҫемҫе те
Сӑпай сӑмах унта нумай.

Йывӑррисем те пур. Тӑнланӑ.
Чул пек пусаҫҫӗ. Ҫеҫпӗл, тен,
Шӑп ҫавсене манми упранӑ,
Тен, ҫавсене аса илсен

Ун куҫӗ умӗнче хӑватлӑн,
Кӗренӗн-хӗрлӗн хӗвӗнсе,
Пуҫа ыраттарса, сулмаклӑн
Чӳхеннӗ йывӑр мӑкӑньсем?..

1955

*Айхи, Г. Ҫеҫпӗл : [сӑвӑ] // Айхи, Г. Сӑвӑсемпе поэмӑсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 35.*